**Урок теми:** Ю. Скворцован «Ултăк» калаври амăшĕ тата ачисем

**Урок эпиграфĕ:**

«Аçу-аннӳне хисеплесе пурăн,
хăвнах ырă пулĕ,
çĕр çинче ĕмĕрӳ вăрăм килĕ».

(Атте Турă Моисей пророкăн заповечĕ (халалĕ))

«Чти отца своего и матерь твою,
Да благо ти буде,
И долголетен будешь на земле».
(Библейская заповедь Божия



Г.Юмарт

**Ах, намăс та çылăх мана!**
**Епле пусарас-ха чуна?**
**Атте-аннене чысласа**
**Куллен пулăшма**
**пĕлеймерĕм…**
**Чунтан кураймастăп хама,**
**Ăçта-ши чикес пуçăма?**

(Геннадий Юмартăн
«Çылăх мана» сăвви)

# Прозаик ҫинчен

Юрий Илларионович Скворцов 1931 ҫулхи январӗн 11-мӗшӗнче Чӑваш Республикин Муркаш районӗнчи Хурӑнкасси ялӗнче ҫуралса ӳснӗ. Патӑрьел районӗнчи Первомайскинчи вӑтам шкултан, Шупашкарти педагогика институтӗнчен вӗренсе тухнӑ. Унтан хаҫат-журнал, кӗнеке кӑларас ӗҫре, редакторта ӗҫленӗ.

Ю.Скворцов 1950-1970 ҫулсенче хастаррӑн ӗҫленӗ паллӑ ҫыравҫӑ, илемлӗ проза ӑсти. Сӑвӑсем, калавсем, повеҫсем ҫырнӑ. Пӗрремӗш сӑвви 1953 ҫулта «Ялав» журналта пичетленнӗ. Унӑн пултарулӑхӗнче «Уках хурӑнӗ», «Хӗрлӗ мӑкӑнь», «Ҫын ӑшши» повеҫсем уйрӑмах паллӑ вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Чылай-чылай сӑввине композиторсем кӗвве хывнӑ. Писатель ытти халӑх произведенийӗсене чӑвашла куҫарас тӗлӗшпе те тимлесе ӗҫленӗ.



Юрий Скворцов

1932-1977

# Ултăк (вăрман кăвакарчăнĕ)




© Nikolay Shpilenok




5





## Амăш патне килме чаракан сăлтавсем

- пӳтсĕр çанталăк
- арăмĕсем упăшкисене хăраххăн ярасшăн мар
- килти «çанталăк» пăтранать

# Йăнăш тунине ăнланчĕç-ши ачисем?

Хулара пурăнакан ывăлĕ Володя пилĕк çул хушшинче пĕрре амăшĕ патне килсен çуралнă килĕ ытти çуртсемпе танлаштарсан япăхса юлнине курчĕ вăл, нимĕн те улшăнманни ăна пĕр енчен савăнтарчĕ те: Володя ачалăха аса илчĕ… Халĕ амăшĕ вилнĕ. Володя кил картине тухать те «пĕлтĕр ун чунне илемлĕн курăннă ӳкерчĕк» ырăнне «çара çил карти» асăрхать. Автор риторикăллă ыйту парать «Чухăнччĕ-и Володя уйăхсерен вунă тенкĕ те пулин амăшне укçа ярса памалăх? Чĕлхесĕрччĕ-и вăл амăшĕн сывлăхĕ çинчен ыйтса пĕлме?» Володя хăй айăпне тинех ăнланать, анчах та кая юлса.

**Итлер-ха пĕр-пĕрин шухăшне**

Ыйтусем:

1.Ачисем ашшĕ-амăшĕ умĕнче яланах парăмра тенине эсир мĕнле ăнланатăр?

2.«Кайăк хитре тĕкĕпе, этем ырă ăсĕпе» текен ваттисен сăмахне эсир мĕнле ăнланатăр?

# Словарь ĕçĕ

**ула тăпа (ултăк)** – вăрман кăвакарчăнĕ, вяхирь

**шур пӳс кĕпе** – шуратман пир кĕпе

**ĕнĕçмест** – ăнăçмасть, хунамасть

**хĕрен** – хăлат, коршун

**масар** – çăва

**сала** – ял

**кункăра** – çăнăх такани

## 1-мĕш ушкăна панă ыйтусем

1.Володьăпа пиччĕшĕсен тăван амăшĕпе шăллĕ патне килменнин чăн сăлтавĕсем мĕнре-ши? Амăшĕ уншăн ывăлĕсене кӳренет-и?

2.Ывăлĕсемпе кинĕсем амăшне аса илеççĕ-ши? Вĕсем яла килме тапрансан мĕнле чăрмав сиксе тухать? Текстра çавна тупăр.

## 2-мĕш ушкăна панă ыйтусем

1.Ула тăпа юрри калавра миçе хутчен тĕл пулать?

2. Автор калава амăшĕ ула тăпа çинчен юрланипе тата произведение çак кайăках хурлăхлăн уласа макăрнипе вĕçлесе мĕн каласшăн пулнă?

# Пĕтĕмлетсе каласан

Ю.Скворцовăн калавĕ кашни çынна шухăшлаттарма тивĕç. Эпир аннесем умĕнче ĕмĕр парăмра. Калаври Володьăна, Çитăрпа Иллене чунтан сивлес килет, вĕсем чăтмалла мар чунсăрла хăтланчĕç: хăйсене пурнăç çулĕ сине кăларнă амăшне юлашки  çула та (Володьăсăр пуçне) ăсатма килмерĕç. Пĕр Саша çеç чунлă пулни курăнать.

Çапла. Çыннăн хайне çуратса ўстернĕ амăшĕ пур. Пур чухне те ачи-пăчи вĕсем çинчен асра тытсах каймасть çав. Час-час çыру та çырмасть, пырса та çўремест, уяв ячĕпе саламлама та манать. Пирĕн çак калавсенчи ывăлсемпе хĕрсем пек чунсăр пулас марччĕ. Хамăр атте-аннене куç пек упрасчĕ, нихăçан та кулянтарас марччĕ.

Эх, аннеçĕм, пĕртен-пĕр анне,  
Эс пире çуратан, ўстерен,  
Ăшăтатăн чуна-чĕрене,  
Çук санран çывăх çын тĕнчере. (В. Давыдов-Анатри)

)